# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ КИРЛĔ

**Анжела Кольцова,**
**10 П класс,**
**Калайкасси шкулĕ**

Чăваш чĕлхи… Мĕн-ха вăл? Эпир мĕн пĕчĕкрен ҫитĕннĕҫемĕн чăвашла, хамăр тăван сăмахсемпе калаҫатпăр. Атте-анне чĕлхи пире ытти халăхсем хушшинче ҫухалса кайма памасть.

Эпир чăвашла калаҫса ҫын пулатпăр. Хăш чухне эпир уй хапхинчен тухсанах чăвашла манса каятпăр. Ҫав вăхăтрах вырăсла та калаҫма пĕлместпĕр. Атте-анне чĕлхине эпир ют тесе йышăнма тытăнатпăр, курнăҫлатпăр, хамăртан култаратпăр. Йывăр саманатсенче кăна анне сăнарĕ, унпа пĕрле тăван чĕлхе аса килет. Анне сăмахĕсен чăн пĕлтерĕшĕ чуна хумхантарать.

Ăна тӳрех ăнланаймасан та, кайран: «Мĕншĕн-ха эпĕ ҫакна тӳрех шухăшлама пĕлмерĕм… Мĕн тери ухмах пулнă-ҫке...»,— тетĕн хăвна.

Авалхине аса илес пулсан, чăваш ун чухне хĕсĕкре пурăннă. Ҫакă вара чăваш чĕлхине ирĕк, ҫутта тухса ҫӳлелле вĕҫме паман, аялалла кăна туртнă. Ăна таптама тăрăшнă. Мĕнле кăна асап курман пуль, мĕн кăна тӳсмен пуль чăваш чĕлхи. Пуҫа усса, ҫĕлĕке пусса лартса, ют халăхсем хушшинче ларнă, мăшкăлран хăраса, сассăр калаҫнă вĕсем.

Унталла та кунталла тарса пытаннă мĕскĕн чăваш! Ҫапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне ҫĕртмесĕр ку тарана ҫитернĕ. Терт хушшинче,



ют халăх айĕнче чăваш чĕлхи ҫухалман. Ĕмĕрсем иртсе пынă, чăваш шăппăн калаҫнă. Чăваш чĕлхи ҫавах та халь те чĕрĕ, халь те сывă. Яланах сывă пул! Сывă пул малалла та! Ку таранччен чăваш сăмахĕ, чĕлхи илтĕнмен — халĕ вара чăваш юрри те, сăвви те, сăмахĕ те янăрать. Атăл хумĕ пек илемлĕн юхать.

Вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, ҫивĕч пулĕ яланах!



# ХĔЛЛЕХИ ВĂРМАН

Мĕн тери илемлĕ хĕллехи вăрманта! Йывăҫсем ҫинче ҫемҫе юр. Ҫĕр ҫинче чĕр чунсен йĕрĕсем. Шурă хурăнсем кĕмĕл пĕркенчĕклĕ хĕрсем пек курăнаҫҫĕ. Чăрăшсем ҫине пăхсан, вĕсем ташланă пек туйăнаҫҫĕ. Тĕрлĕ кайăксем йывăҫсем ҫине ларнă чухне туратсем ҫинчен юр ӳкет.

Хĕлле вăрман асамлă курăнать. Кунĕпе ҫак илемпе киленсе ҫӳреттĕм, анчах та ҫанталăк сивĕ тăрать. Мана сивĕ пулсан та, ăсансене сивĕ мар. Вĕсем юр айне кĕрсе выртаҫҫĕ те ҫывăраҫҫĕ. Упасемпе чĕрĕпсем те курмаҫҫĕ хĕле. Ҫывăраҫҫĕ вĕсем, ҫуркунне тин вăранаҫҫĕ.

Вăрманта юр нумай пулсан кăмпасемпе ҫырла пит нумай пулать теҫҫĕ.

Хĕлле вăрманта лăпкă, шăп. Ҫил вĕркелени, улатакка таккани кăна илтĕнет. Юр вара хĕвел ҫинче илемлĕн ялкăшса выртать. Ун ҫине хаклă йышши чулсем сапса тухнă евĕр туйăнать. Ҫав тери илемлĕ кунта!

Хĕллехи вăрман мана питĕ килĕшет, мĕншĕннине эсир хăвăрах ăнлантăр ĕнтĕ. Сире те пулса курма сĕнетĕп. Хĕллехи вăрман килĕшĕ, сире те тыткăна илĕ.

**Лена ВЕРНОВА,**
**Шатракасси шкулĕ,**
**6 класс.**

***куҫарусем***

**Елена Тимофеевна КРАСНОВА**

**Зима**

Белый снег, пушистый
В воздухе кружится
И на землю тихо
Падает, ложится.

И под утром снегом
Поле забелело,
Точно пеленою
Все его одело.

Темный лес, что шапкой
Принакрылся чудной
И заснул под нею
Крепко , непробудно...

Божьи дни коротки,
Солнце светит мало,-
Вот пришли морозы-
И зима настала.

***Иван СУРИКОВ***

**Хĕлле**

Кăпăш шурă юрĕ
Сывлăшра вăранчĕ.
Ҫĕр ҫине вăл шăппăн
Ӳксе сапаланчĕ.

Ир енне уй-хирĕ
Шур юрпа шуралчĕ,
Чĕркесе вăл хунăн
Хитре тум тумланчĕ.

Ҫывăрать вăрманĕ
Вăранмасăр, тӳлĕк.
Пуҫне тăхăнтарнă
Питĕ капăр ҫĕлĕк.

Кĕске кун хĕвелĕ
Пит сахал пăхасшăн.
Сивĕсем ҫĕнтерчĕҫ,
Хĕл, иккен, ларасшăн.

**ВЕСЕННИЕ ВОДЫ**

***Федор Тютчев***

Еще в полях белеет снег,
А воды уж весной шумят-
Бегут и будят сонный брег,
Бегут и блещут и гласят...

Они гласят во все концы;
«Весна идет, весна идет!
Мы молодой весны гонцы,
Она нас выслала вперед!»

Весна идет, Весна идет!
И тихих, теплых,
майских дней
Румяный, светлый хоровод
Толпится весело за ней.

**ҪУРХИ ШЫВСЕМ**

Татах хирте юр шуралать,
Ах, шывĕ ҫуркунне юхать-
Чупать, ҫырана вăратать,
Чупать, юхать текăшкăрать...

Вăл питĕ хытă кăшкăрать:
«Ăш ҫуркунне кунта утать!
Эп ҫамрăк ҫуркуннен тарҫи,
Эп пуринчен те маттури!»

Ăш ҫуркунне кунта утать!
Те ăшă, шăп ҫу кунĕнче
Ҫап-ҫутă карта савăнать,
Хавас утать ун хыҫĕнче.

**вырăсларан**
**Мария КРАСНОВА куҫарнă**